«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»

# Калайкассисен те – çĕнĕ ФАП

**«Сывлăх сыхлавĕ» нацпроектăн «Сывлăх сыхлавĕн малтанхи сыпăкĕн модернизацийĕ» программа шайĕнче Муркаш районĕнче тăватă ялта çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ тăваççĕ. Ку ĕç кĕçех вĕçленет.**

ФАП-сенче хăтлă пулĕ: вĕсенче пуринче те çынсене йышăнмалли, процедурăпа прививка тумалли, эмел препарачĕсем упрамалли пӳлĕмсем йĕркелеççĕ, кĕтсе лармалли та ятарлă вырăн пулĕ. Кунта пĕтĕмпех СанПиНа тивĕçтермелле тăваççĕ, медицина сĕтел-пуканĕпе тивĕçтереççĕ.

ФАП территорине хăт кĕртессине те пăхса хунă.

Калайкассинче те унччен йывăç çуртра вырнаçнă кивĕ фельдшерпа акушер пункчĕ вырăнне çĕнни пулать. Малтанхи патне çынсене çӳреме те меллех пулман. Ку вара – çĕнĕ вырăнта.

Хальхи вăхăтра çĕнĕ çуртра шалти ĕçсене пурнăçлассипе тимлеççĕ, ФАП патне çитмелли çула, территорие хăт кĕртеççĕ.

Строительство ĕçне пурнăçлама укçатенкĕ республика бюджетĕнчен уйăрнă – 5 млн тенке майлă.

«Часах ку тăрăхри пилĕк ялтан çĕнĕ ФАП-а килсе диагностика тата сиплев процедурисене тума пултарĕç. Çакна валли оборудовани пулать. Фельдшерпа акушер пунктĕнчи условисем ĕçлекеншĕн те лайăх, килекен çынсем валли те.

Калайкассинчи çĕнĕ ФАП-ра хăйĕн ĕçне Эльвира Столярова фельдшер малалла тăсĕ. Вăл ку ĕçре 30 çула яхăн тăрăшать. Ăста фельдшер, ял çыннисем ăна хисеплеççĕ», – палăртать Муркш район тĕп больницин тĕп врачĕ Оксана Попова.



Калайкассинчи ФАП-ра пурĕ 406 çыннăн сывлăхне пăхса тăрĕç. Вĕсен йышĕнче 46 ача тата 19 çамрăк.

Эльвира Столярова та хăйĕн шухăш-кăмăлне савăнсах пĕлтерчĕ: «Пирĕн ялта фельдшерпа акушер пункчĕ пулнă паллах, анчах вăл питĕ кивелсе çитнĕччĕ. Хĕлле сивĕччĕ. Васкавлă медицина пулăшăвĕн машинисен те çывăха килме май çукчĕ. Шывне хамăр кӳрсе килнĕ, вĕри шыв пулман. Ку çĕнĕ çурт вара ял çыннисем валли чăн-чăн парне пулчĕ, пытармастăп, мана валли те – юбилей ячĕпе».

Ялта пурăнакансем чăнах та савăнаççĕ. «Питĕ хăтлă çурт пулать. Килекен çынна алă çума та, тирпейленсе илме туалет та пур. Кунта килсе çӳреме пире пурне те кăмăллă пулĕ тесе шутлатăп», – тет тивĕçлĕ канури Галина Дмитриева.

# Çемьесен ачаллă пулма май пур



**Çĕршывĕпех, вăл шутра пирĕн республикăра та, çын шучĕ чакса пынă вăхăтра хĕрарăмсен сывлăхне упрасси тата ача çуралассин кăтартăвне пысăклатасси çĕршывăн наци хăрушсăрлăхĕн задачиех пулса тăрать. Çавăнпа та «Демографи» нацпроектпа питĕ калăпăшлă ĕçсем пурнăçлама палăртнă.**

Вĕсенчен пĕри – хăйсем тĕллĕн ачаллă пулайман çемьесене ачаллă пулма пулăшасси. Пĕр темиçе çул каялла «эсир ачаллă пулаймастăр» тени хăйне майлă приговор пекех шутланнă. Паян вара ку пачах та апла мар.

Хальхи вăхăтра медицина ЭКО меслечĕпе усă курса мăшăрсене ачаллă пулма пулăшать.

Çак меслете, лаборатори условийĕсенче ачана пурнăç парса аталантарассине, программа тесех палăртаççĕ, мĕншĕн тесен ЭКО меслечĕ арçынпа хĕрарăма çак утăма тума хатĕрлессинчен пуçланать те хĕрарăмăн тата ачан сывлăхне тĕрĕслесе тăнипе вĕçленет.

Çак меслетпе çуралнă пĕрремĕш ача паян 40 çултан та иртнĕ. Паянхи кун вара ЭКО меслечĕпе питĕ анлă усă кураççĕ, мĕншĕн тесен çак программа меллĕ пулса тăчĕ.

«ЭКО-па усă курса ачаллă пулас текенсен чи малтанах хăйсене кăмăл-туйăм енчен хатĕрлесе çитермелле, мĕншĕн тесен процедура çийĕнчех результатпа савăнтараканни мар, вăрăма тăсăлать. Çавăнпа та чăтăмлăх кирлĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, ЭКО çак программăна хутшăнакансен 30 – 40 проценчĕн кăна тӳрех ăнăçлă пулма пултарассине шута хумалла», – ăнлантарать Муркаш район тĕп больницин гинеколог врачĕ Елена Васильева **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре).**

Врач ку процедура нумай факторпа çыхăннине пĕлтерчĕ. Хĕрарăмсен чăрмавĕсен шутне эндокрин факторĕсем, шыçă чирĕсем, организм аталанса çитиччене çие юлнинчен хăтăлни, операци тунине пула амалăх органĕсен кĕпçисем пĕрĕнни, гинекологи патологийĕсем тата ытти те кĕреççĕ. Арçыннăн сăлтавĕсем вара шыçă, ерекен чирчĕр пуррипе е аманнă-суранланнинче пулма пултараççĕ.

Апла пулин те паянхи кун ЭКО процедурине тӳлевсĕр туса иртерме май пурри тата пысăкрах шанăç кӳрет.

Елена Васильева пĕлтернĕ тăрăх, кăçал ЭКО процедурине тӳлевсĕр иртерме пирĕн район валли 10 квота уйăрса панă. Ултăшĕпе усă курнă та ĕнтĕ. Икĕ мăшăр халĕ ача кĕтет, врач вĕсене хĕрарăмсен консультацийĕнче сăнаса тăнине пĕлтерчĕ. Паллах, ку ырă хыпар, чи малтанах – çемьесемшĕн.

«ЭКО патне эпир виçĕ çул «утрăмăр», çемьеленнĕ хыççăн вунă çула майлах пирĕн ача пулмарĕ. Эпĕ çине тăрсах тĕрĕсленме пуçларăм, тĕрлĕ операци витĕр тухма тиврĕ, анчах «сирĕн ЭКО-па усă курмалли кăна юлать» тенине çеç илтрĕм. Çак сăмахсене пĕрремĕш хут илтнĕ хыççăн тӳрех нимĕн тума аптăрарăм... Халĕ вара амăш пуласси те инçе юлмарĕ», – савăнăçĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пулнине палăртать программăпа усă курнă хĕрарăм.



«Тĕрлĕ сăлтава пула ачаллă пулайманнисене Муркашри тĕп больницăри акушер-гинеколог патне пыма чĕнсе калатăп. Çак процедурăна тӳлевсĕр иртерме ятарлă программăна кĕме ĕлкĕрмелле, çавăнпа та пĕр тăхтаса тăмасăрах больницăна пымалла», – вĕçлерĕ калаçăва врач.

ЭКО меслечĕпе усă курас текенсене психолог пулăшăвĕ кирлĕ. Муркашри тĕп больницăра çак пулăшăва та илме пулать.

Тата тепĕр саманта та шута илмелле. ЭКО ачаллă пулайманнисене пулăшмалли программа кăна мар. Унпа генетика чирĕсем, сăмахран, гемофили чирĕ пур çынсем те усă курма пултараççĕ. Çемьере ашшĕ-амăшĕ сывă пулин те, ача Даун паллин чирĕпе çуралнă хыççăн теприне ЭКО мелĕпе пурнăç пама пулать. Çапла майпа сывă ача çуралĕ.

**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тунă çынсен ĕç паттăрлăх çулталăкĕ

# Ырă кăмăлпа чăтăмлăх тĕслĕхĕ

**Сăр хӳтĕлев чиккине тунă тапхăр Сыпай ялĕнчи Яшковсен çемье историйĕнче хăйне майлă вырăн йышăнать.**

**Яшковсен çемйинчи чи аслă çын – Татьяна Александровна Иванова –** çав хӳтĕлев чиккине тума хутшăннă çын. Вăл паян та çав шартлама сивĕ хĕле лайăх астăвать.

Татьяна Александровна 1924 çулта Шупашкар районĕнчи Мемеш ялĕнчи нумай ачаллă çемьере çуралнă. Шкулта пуçламăш классенче кăна вĕреннĕ.

«Хĕр ачасемпе пĕрле çум çумланă, утă хатĕрленĕ, ĕне сунă, хресченĕн пур ĕçне те тума пĕлнĕ. Колхозра ĕçленĕшĕн ĕç кунĕ çырса паратчĕç», – тет вăл ачалăхне астуса илнĕ май.

Вăл 17-ре чухне Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă. Пур яш-кĕрĕме те вăрçа илсе кайнă. Татьянăн ашшĕпе пиччĕшĕсем те фронта тухса кайнă.

Ялта ачасем, мучисем, хĕрарăмсем юлнă. Декабрь пуçламăшĕнче ялти çамрăк хĕрарăмсене тата хĕрсене пурне те ĕç фронтне кайма повестка панă. Кун пек повесткăна Татьяна та илнĕ.

Вăрман каснă, çĕр чавнă, çĕрпӳртсем тунă. Ĕç çĕрле те чарăнман. Çиме вара – камăн мĕн пулнă çавăнпа апатланнă. Кашни ĕçлекенĕн хăйĕн нормине пурнăçламалла пулнă – пурçук вăя хурса ĕçленĕ. Шартлама сивĕре пите тăм ан илтĕр тесе хур е сысна çăвĕ сĕрнĕ.

Çак йывăр вăхăт пирки Татьяна Александровна ачисене пĕрре мар каласа панă, анчах ытларах хăйсем мĕнле юрăсем юрлани, тул çутăлма тытăннăранпа сĕм тĕттĕм пуличчен тăрăшса ĕçлени, ыррине шанни, çĕнтерĕве çывхартнинче вĕсен тӳпи пулни пирки сăмах пуçарнă.

1946 çулта Татьяна Захар Иванович Яшковпа пĕрлешсе çемье çавăрнă. Захар Иванович вăрçăра темиçе хут аманнă, контузи чăтса иртернĕ фронтовик пулнă. Мăшăр пилĕк ача



çуратса ӳстернĕ, анчах пĕрле нумаях пурăнайман: 1961 çулта Захар Иванович пурнăçран уйăрлса кайнă.

Татьяна Александровнăн пур ĕçе те хăй çине илме тивнĕ. Вăл колхозра вăй хунă. Уйсенче урапаллă тракторсем ĕçлеме пуçласан, Татьяна та механизаторсен курсне пĕтернĕ. Хĕрарăмсен трактор бригадине йĕркеленĕ. Сухаланă, акнă, тухăç пухса илнĕ... Çĕрле уйра трактор рулĕ умĕнче çывăрма та тивнĕ хăш чух. Уйрах хĕрсем пĕр-пĕрне тракторти кăлтăксене пĕтерме пулăшнă...

Ку тапхăр хыççăн Татьяна Александровна уй-хир бригадинче вăй хунă, кайран – дояркăра. Тырăллă, укçаллă пулас тесе вăл Чулхула облаçне те пĕрре мар кайса ĕçлесе килнĕ. Ĕçчен çыннăн тĕрлĕ Хисеп грамотипе Тав çырăвĕ те чылай.

Халĕ Татьяна Александровна 97 çулта. Вăл Василий ывăлĕн çемйипе пĕрле пурăнать. Унăн паян 11 мăнук, кĕçĕн мăнукĕсем 14-ăн, кĕçĕн мăнукĕсен те ачисем пур – пурĕ 6. Вĕсен тимлĕхĕпе юратăвĕ ăна пурăнма вăй-хал парса тăраççĕ.

Татьяна Александровна хăйĕн пысăк çемйишĕн ырă кăмăл тата чăтăмлăх тĕслĕхĕ пулса тăрать. Ял-йышра та вăл пысăк хисепре.

Т. ВАСИЛЬЕВА.

Конкурс

# Чăваш шăрттанĕшĕн сасăлар

Чăвашпотребсоюзăн официаллă сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Ен кооператорĕсен продукцийĕ «Вкусы России – 2021» апат-çимĕç продукчĕсен регион брендĕсен наци конкурсне хутшăнать. Конкурс сакăр номинаципе иртет.

Чăвашпотребсоюзăн Етĕрнери ашпăш комбиначĕ хатĕрленĕ «Чувашский» шăрттан, иртнĕ çулхи пекех, «На всю страну» номинацире хăйĕн пахалăхне тĕрĕслет. Октябрĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 7-мĕшĕччен уншăн https,//russiantastes.ru/ сайтра халăх сасăлавĕ иртет, унăн пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх «Нас выбирают» номинацири çĕнтерӳçĕсене палăртаççĕ.

Иртнĕ çул çак конкурса Раççейĕн 79 регионĕнчен 491 бренд хутшăннă. Кăмăлланă çимĕçшĕн иртекен халăх суйлавне миллион ытла çын хутшăннă. Хаçат вулакансем те сасăлава активлă пуласса шанас килет.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.